чăваш халăх хаçачĕ

1906 çулхи кăрлачăн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă 1918 çулхи нарăс уйăхĕнчен тĕрлĕ ятпа тухнă 1991 çулхи çурлан 30-мĕшĕнче "ХЫПАР" ятпа тепĕр хут тухма пуçланă

СССР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1968 çулхи пуш /март/ уйăхĕн 11-мĕшĕнче "Коммунизм ялавĕ" /халĕ "Хыпар"/ хаçата "ХИСЕП ПАЛЛИ" орденпа наградăланă

ХЫПАР

"ХЫПАР" никĕслевçи Н.В.Никольский (1878–1961)

198/25603/№ Юн кун, 2010, юпа (октябрь), 13 Хакĕ ирĕклĕ WWW.hypar.ru

● Пĕр-пĕрне ăнланса, халăхпа килĕштерсе ĕçлесен малалла кайма пулатех

ĂНĂÇУ НИКЕСĔ – ПУÇАРУЛĂХПА ЯВАПЛĂХ ● ➡ 2 стр.

● «Журналист укçипе çакăн пек кермен нихăçан та лартаймăн...»

«ТĂВАН ЕН» ятарлă кăларăм ● ➡ 3 стр.

● Геннадий Петрович ĕçлĕхлĕ çын пулнипе пĕрремĕш тĕл пулурах кăмăла ларчĕ

ТĂВАН ЧĔЛХЕПЕ ВУЛАНИНЕ НИМĔН ТЕ ÇИТМЕСТ ● ➡ 4 стр.

"ХЫПАР" Издательство çурчĕн хаçачĕсен эрнери тиражĕ 84614 экземпляр

«Суйлавçăсем яланах тĕрĕс шухăшлаççĕ»

Михаил Игнатьев ертсе пынипе ирттернĕ йăлана кĕнĕ канашлăва Чăваш Республикинче пушар хăрушсăрлăхĕпе тивĕçтермелли хушма мерăсене, вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен суйлавĕн пĕтĕмлетĕвĕсене, продукци сутăн илнĕ чухне бюджет укçи-тенкине еплерех тăкакланин мониторингне, Чăваш Республикин 2010 çулхи 9 уйăхри социаллă пурнăçпа экономика аталанăвĕн малтанхи пĕтĕмлетĕвĕсене халлланă.

Чăваш Ен Президенчĕ кăçал çулла вăрмансенче пушарсем алхаснă май хăй хăрушсăрлăха тивĕçтерес енĕпе хушма мерăсем йышăнас пирки калакан указа алă пусни çинчен пĕлтернĕ.

Чăваш Республикин Президенчĕн Администрацийĕн ертÿçи Александр Иванов вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен суйлавĕн пĕтĕмлетĕвĕсем çинчен каласа панă. Унта «Пĕрлĕхлĕ Раççей» парти çĕнтернĕ. Республикипе илсен вăл депутатсен районсен тата хуласен пухăвĕсен депутатсен мандачĕсене 83,5% илнĕ. РФКПн – 1,5%, «Тĕрĕслĕхшĕн тăракан Раççей» партин – 1,3%, Раççей либерал-демократсен партийĕн – 0,6%. Депутатсен ытти вырăнне хăйсене хăйсем кандидата тăратнисене панă.

«Ку – пирĕн суйлавçăсен хаклавĕ, влаçăн пĕтĕм ĕçхĕлне хаклани. Лару-тăрăва мĕн таран пĕлетпĕр, чăнлăха мĕн таран тата ăçта илемлетсе кăтартатпăр. Суйлавçăсем яланах тĕрĕс шухăшлаççĕ», – пĕлтернĕ Михаил Игнатьев суйлава пĕтĕмлетсе.

Чăваш Республикин Президенчĕ Экономика аталанăвĕн, Вĕренÿ, Сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану, Спорт министерствисен ертÿçисем продукци сутăн илнин эффективлăхĕн мониторингĕ тата социаллă сфера учрежденийĕсен бюджечĕсене тивĕçсĕр тăкаклана укçатенке тавăрса памалли процесс мĕнле пыни çинчен тунă отчетсене итленĕ. Паянхи кун тĕлне 2 млн та 147 пин тенкĕ тавăрса панă, должноçри 80 ытла çынна дисциплина енĕпе явап тыттарнă. Тĕрĕслевсем малалла пыраççĕ.

Михаил Игнатьев республикăн социаллă пурнăçпа экономика аталанăвĕн малтанхи пĕтĕмлетĕвĕсем, хăшпĕр отрасль, уйрăммăн илсен пурăнмалли çурт-йĕр строительстви, потребительсен ыйтăвĕ еплерех пулни çинчен пĕлтернисене итленĕ. Вак суту-илÿ çаврăнăшĕ ÿсет, налук ытларах пухаççĕ, унăн ÿсĕмĕ, ЧР финанс министрĕн Николай Смирновăн шухăшĕпе, кризисченхи шая çитет.

■ А.ЛЬВОВА

Асăрхăр: АКЦИ!

Раççей почтин мĕн пур уйрăмĕнче октябрĕн 14-мĕшĕнчен пуçласа 24-мĕшĕччен «Хыпар» Издательство çурчĕн хаçачĕсене

ВИÇĔ ÇУЛ КАЯЛЛАХИ ХАКПА çырăнтараççĕ

ИНДЕКС	КĂЛАРĂМСЕМ	ХАКСЕМ
В4800	«Хыпар»	370,08
В8353	«Хыпар» - шăмат кун»	124,98
В4804	«Çамрăксен хаçачĕ»	204,54
В1515	«Чăваш хĕрарăмĕ»	183,96
В1524	«Сывлăх»	99,66
В4806	«Кил-çурт, хушма хуçалăх»	93,72

Васкăр, çемье бюджетне перекетлĕр!

• Тĕл пулу

Президент милици ĕçне ырласа хакларĕ

Кăшт мухтанам-ха: çак йĕркесен авторĕ йĕркеллĕ çын пулнине халь республика Президенчĕ те пĕлет. Ĕнер вăл тĕп хулан Шалти ĕçсен управленийĕнче пулчĕ. Михаил Игнатьева унти ĕç-хĕлпе тĕплĕн паллаштарчĕç. Ятарлă компьютер базине те кăтартрĕç: кирек кам пирки те пĕтĕмпех пĕлме пулать иккен. Кам тĕслĕхĕпе ĕнентермелле? Шалти ĕçсен министрĕн Вадим Антоновăн куçĕ тĕлне шăпах «Хыпар» корреспонденчĕ лекрĕ: «Коновалов...» Ятшыв, хăçан çурални... «Мĕн, нимĕн те çук-им?» – тĕлĕнчĕ ШЕМ пуçлăхĕ. Судпа айăпланман, административлă правăна пăсман. «Тап-таса вĕт!» – хăюллантăм эпĕ те. Президент та сăмах хушрĕ: «Яланах çапла пул!» Куçăхас марччĕ.

ЧР ПА пресс-службин сайтĕн ÿкерчĕкĕ.

Михаил Васильевич «Хăрушлăхсăр хула» видеосăнав тытăмĕпе кăсăкланса паллашрĕ, çулталăк каялла кăна йĕркеленнĕ управленин кăтартăвĕсемпе интересленчĕ. Унтан вара ШЕМĕн 9 уйăхри ĕç-хĕлне тишкерме пухнă канашлăва хутшăнчĕ.

Министр палăртнă тăрăх – милици ĕç-хĕлĕнче курăмлă улшăнусем пуласси паллă. «Полици çинчен» саккун, штатсене самаях чакарни – подразделенисен ертÿçисене те çак самантсене шута илсе доклад тума сĕнчĕ. Вĕсем çакна тĕпе хучĕç.

Тĕп кăтарту – 9 уйăхра пĕлтĕрхи çак тапхăртинчен 13 процент сахалрах преступлени регистрацилени. Паллах, ку вăтам кăтарту. Кашни 10 пин çын пуçне тивекен преступленисем тĕлĕшпе вара уйрăмлăх самай пысăк: чи сахал преступлени пулнă районсен – Вăрмар, Комсомольски, Елчĕк, чи нумаййи – Куславккапа Шупашкар тÿпи. Преступленисене уçса парасси 72,3 процентпа танлашнă – лайăх кăтарту.

Штаб пуçлăхĕн çумĕ Александр Кожемяков ĕçсĕррисем нумай преступлени туни çинче пайăрăн чарăнса тăчĕ. Республикăра ĕçсĕр 15 пин ытла çын, вĕсенчен 3 пинĕшĕ кăçал ĕç çухатнă. Çавна май преступлени тунă çынсен йышĕнче те вĕсен тÿпи пысăк – 60 процент.

Çемьери, йăлари преступленисем тĕлĕшпе те уйрăм каласу пулчĕ. Пĕр самант: халĕччен арăмне хĕнекен арçынна УК 116 статйипе айăпланă – çынна хĕненĕшĕн. Яваплăх пит çирĕпех теейлĕн. Халь вара милици çавнашкаллинех 117 статьяпа хаклама тăрăшать – çынна асаплантарни. Унпа çемьери, йăлари пусмăрçăсене самай çирĕпрех явап тыттарма май пур. Ку пуçтахсене вырăна лартма пулăшасса шанаççĕ.

Асăннă йышши преступленисен статистики аванланни сисĕнет. Çапах В.Антонов хăйне пăхăнса тăракансене асăрхаттарчĕ: çав кăтартусене хамăрăн çитĕнÿ вырăнне хурса лăплани вырăнсăр. Вăл çавăн пекех çын вĕлернипе çыхăннă уйрăмах йывăр, уçса парайман 4 преступлени шăпипе кăсăкланчĕ. Уголовнăй шырав ертÿçи çĕнĕ хыпарсем çукки çинчен пĕлтерсен Президент умĕнчех сивлеме те именмерĕ: питĕ япăх...

Экономикăри преступленисемпе кĕрешекен управлени пуçлăхне Валерий Плотникова вара М.Игнатьев хăй сĕнÿ пачĕ. Вăл тĕп хулари Николаев урамĕнчи ял хуçалăх пасарĕ пирки сăмах пуçарчĕ. Унăн пĕр пайĕ – республика тата муниципалитет харпăрлăхĕ. Шăпах пасар харпăрлăхĕ тавра пăтрашу çуралнă иккен – «Зерноре гион» текен тытăм пăтратать. Сăмах вун-вун миллион тенкĕ пирки пырать. Президент каланă тăрăх – пĕтĕмпе те 5 млн тенкине çеç тавăрса панă. Вăл ĕç-пуçа право хуралĕн органĕсен куçĕпе хакласа уçăмлăх кÿме ыйтрĕ.

В.Плотниковăн вара мухтанас кăмăл пулмарĕ. Вăл çитменлĕхсене пытармарĕ. Сăмахран, ăна УК 290 статйипе /взятка илни/ пурнăçлакан ĕç тивĕçтермест, суя укçа сарнă тĕслĕхсене тăрă шыв çине кăларас енĕпе те вырăнсенче çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Чăн та, ку управленин ăнăçусем çуккине те пĕлтермест. Валерий Васильевич ЧЭАЗ бренчĕпе усă курса суя релесем сарнă ултавçăсен каварлашнă ушкăнне сиенсĕрлетни çинчен каласа пачĕ. Çак ушкăн контрафакт продукцие 40 ытла предприятие сутнă – вун-вун миллион тенкĕлĕх. Уголовнăй ĕçре – 65 том. Çак релесем хăрушсăрлăха тивĕçтереннине экспертиза çирĕплетнĕ ĕнтĕ.

Милицин хăйĕн ĕç-хĕлне тивĕçтересси те пысăк пĕлтерĕшлĕ. Кăçал Чăваш Ен ШЕМĕ пĕтĕмпе 2 млрд та 34 млн тенкĕ укçа илнĕ.

● 2 стр. ➡

Н.Федоров сенатор ĕçе тытăннă

Раççей Федерацийн Федераци Пухăвĕн Федераци Канашĕн Председателĕ Сергей Миронов сĕннипе Николай Федоров Çĕр-шывсен хушшинчи ĕçсен комитетĕнче ĕçлеме тытăннă. Чăваш Енĕн Федераци Канашĕнчи представителĕ Раççейпе Намиби хушшинчи правительствăсен «Укçа-тенкĕ хывассине хавхалантарасси тата капитала хÿтĕлесси çинчен» Килĕшĕвне сÿтсе явма хутшăннă. Асăннă документ Чăваш Енри промышленноç предприятийĕсемпе тачă çыхăннă тата вĕсемшĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ.

Аса илтеретпĕр: пирĕн республикăна çак çĕр-шывăн Чрезвычайлă тата полномочиллĕ посолĕ Самуэль Кавето Мбамбо ертсе пыракан делегаци пĕр хут çеç мар килсе кайнă. Визит вăхăтĕнче Намиби хăнисем Шупашкарти «Промтрактор» АУО, «АБС ЗЭиМ Автоматизаци» АУО, Канашри «Промтрактор-Вакун» АХО предприятийĕсен тата ыттисен ĕç-хĕлĕпе кăсăкланнă.

Комитет ларăвĕнче çавăн пекех Раççейпе Япони хушшинчи пĕр-пĕрне право пулăшăвĕ памалли килĕшĕве ратификацилессине сÿтсе явнă тата ырланă.

Николай Федоров федераци министерствисемпе ведомствисен ертÿçисемпе, Раççейри тата ют çĕр-шыври паллă инвестици компанийĕсемпе банкĕсен представителĕсемпе тĕл пулусем ирттернĕ. Вĕсемпе Чăваш Республикин ял хуçалăхĕпе промышленноçне çĕнĕ инвестицисем хывас ыйтусене сÿтсе явнă.

КУН хыççăн КУН

☎ 56-04-26

Тăххăрмĕш вулав

Юпа уйăхĕн 7-мĕшĕнче Чăваш наци музейĕнче асăннă музейĕн пĕрремĕш директорĕсенчен пĕрин – Михаил Петрович Петров-Тинехпи историкĕн тата этнографăн – ячĕпе çуллен йĕркелекен IX вулав иртнĕ. Унта хутшăнакансен ыйшĕ çуллен ÿсет. Вĕсем – музейсемпе архивсен ĕçченĕсем, аслă вĕренÿ заведенийĕсен преподавателĕсемпе студентсем, шкулта ĕçлекенсем.

Пленарлă ларура музей директорĕ Ирина Меньшикова палăртнă тăрăх – вулава ытти регионтан та, тĕслĕхрен, Мари Эл тата Тутарстан республикисенчен, хăнасем килсе çитнĕ.

Чăваш наци музейĕн курав ĕçĕ-хĕлĕ пирки директорăн ăслăлăх енĕпе ĕçлекен çумĕ Вера Шляхина доклад тунă. Куравсемсĕр пуçне кунта «XX ĕмĕр. Çынсем тата ĕçсем» программăпа ĕçлессине те пĕлтернĕ.

Чăваш наци библиотекин ĕçченĕсем Галина Соловьевăпа Роза Степанова «Чăваш Ен культура еткерлĕхĕ» информаци порталĕпе паллаштарнă.

Хăнасенчен Козьмодемьянскри культурăпа истори музейĕсен комплексĕн истори пайĕн пуçлăхĕ Владимир Шерстнев хăйсен тавра пĕлÿ ĕçĕ епле аталанни çинчен каласа кăтартнă.

Музейпе курав центрĕн ертÿçи Татьяна Вишнякова Чăваш Ен музыка культурин ĕçченĕсем, Сталин репрессийĕсене пула инкек тÿснисем пирки аса илнĕ. Каярах Трактор историйĕн ăслăлăх техника музейĕн презентацийĕ иртнĕ. Тăхтав хыççăн вулава хутшăннисем секцисене пайланса ĕçленĕ.

Н.ГЕОРГИЕВА.

Мускавра – чăвашсен тепĕр ярмăркки

Мускаври Таганка район управине кĕрекен пасарта Чăваш Республикинчен илсе килнĕ ял хуçалăх таварĕсен «Ылтăн кĕркунне. Чăваш ярмăркки» (халăх çитĕнĕвĕсен куравĕнче иртнипе ан пăтраштарăр) ĕçленĕ. Виçĕ куна пынă апат-çимĕç сутăвĕн уявне Мускаври Таганка район управин пуçлăхĕн çумĕ Л.С.Чувакина уçнă.

Чăваш Республикин Раççей Федерацийĕн Президенчĕн çумĕнчи полномочиллĕ представителĕ Г.С.Федоров Таганка пасарĕнче чăваш ярмăркине ирттересси йăлана кĕнине, ăна икĕ ен те – Чăваш Республикипе Мускав – кĕтнине палăртнă.

Чăваш ярмăркине пухăннисене Çĕрпÿ районĕнчи Вăрманкас Кĕçтемерти культура çурчĕ çумĕнчи юрăпа ташă ансамблĕ пултарулăхĕпе савăнтарнă.

А.СТЕПНОВ.

ПУБЛИЦИСТ ШУХĂШĔ

ÇĔНĔ ÇЫРАВ ЧĂВАША МĔН СУНĔ?

Çак каласăва пуçарма сăлтавсем пулчĕç. Вĕсенчен пĕри – шăпах çак вăхăтра вун сакăр çул каялла Чăваш наци конгресне йĕркелени. Çак тапхăрта çĕнĕ ăру ÿссе çитĕнсе пурнăç çулĕ çине тăчĕ. Тепри – Пĕтĕм Раççей халăх çыравĕ. Иккĕшĕн хушшинчи çыхăну мĕнлерех? ЧНКан чăвашлăх ĕçĕнчи хастарлăхне палăртакан самант вăл. Çавăнпа та хамăн сăмахăма конгресăн малтанхи утăмĕсене, тĕллевĕсене аса илнинчен, ăна мĕнлерех майпа пурнăça кĕртсе пынинчен, çырава чăвашсем пурăнакан регионсенче мĕнлерех шайра кĕтсе илнинчен тата унран мĕн кĕтнинчен пуçлас тетĕп.

Тĕне кĕмен чăвашсем тĕплансе пурăнакан хутлăхри – Самар облаçĕнчи Шунтал районĕнчи Ухинккелри – йăхташсем: «Этем çĕр çине чăваш пулса килет», – тенине тĕпе хурас тăк ентешĕмĕрсем тымар яман кĕтес çук та. Сăнарлă çак шухăшăн пĕлтерĕшĕ хăй мĕне тăрать! Аплаи, капла-и – халĕ Раççейре /унта çеç-и/ чăваш пурăнман регион пур-ши? Тăван чĕлхине «манса» вырăсла çеç перкелешме тапратнă, хăй чăваш пулнине кÿрши-аршине, пĕлĕшĕсене калама шикленнĕ. Чунĕпе, кăмăлтуйăмĕпе вара тăван йăх-тымарĕнчен «татăлсах» ÿкнĕ-ши? Иккĕленетĕп. Чĕрин пĕр кĕтесĕпе те пулин чăваш кĕвви-çеммишĕн вилесле тунсăхланах, ĕмĕчĕпе, шухăшĕпе ашшĕ-амăшĕ чун парнеленĕ кĕтеспе кăвапаллă пулнах ĕнтĕ.

Çак сăмахсем тĕрĕс пулнине пурнăç хăй çирĕплетсе пачĕ. Чăтнă мăнтарăн чăвашĕ, анчах тăванлăх туйăмĕ, юнпа чун кĕрешĕвĕ парăнман, несĕлсен йыхравĕпе тăван çĕрне-шывнех туртăннă. Наци конгресне йĕркелесе яни вара йăхташăмăрсен асар-писер, çил-тăманлă пурнăçне хĕвеллĕ, çутă кунсем вирхĕнсе кĕнĕнех туйăнчĕç. Пĕрремĕш Аслă пухăва пуçтарăннисен хавхалануллă та савăнăçлă кулăпа çиçекен пит-куçне аса илетĕп те – ун чухне вĕсем тем тума та, кирлĕ пулсан сăрттăва çавăрса хума вăй çитернĕ пек туйăнатчĕ. Чи пĕлтерĕшли – халăх вăранни, унăн хăйĕншĕн, пуласлăхшăн ĕçлес кăмăлĕ пысăк пулни, республикăра пурăнаннисемпе тулашра тĕпленнисем çывăхланас тени пулнă. Тăван халăха ĕмĕрĕпех хумхантарнă ыйтусене хускатакан çеç мар, татса пама пултаракан тытăм вырăнĕнчеччĕ ун чухне ЧНК. Шаннă, ĕненнĕ ăна. Чăнах та, питĕ хăюллăн ĕçлеме пуçланăччĕ чăваш ывăл-хĕрĕ. Пĕр Аслă пуху иртет е тепри – йышăну хыççăн йышăну çуралать: «Чăваш Республикин «Гражданлăх çинчен» саккунĕн принципĕсем çинчен», «Çĕнĕ паспорт тăвасси çинчен», «Тулай чăвашĕсем валли ятарлă хаçат уçасси тата «Интер-Хыпар» информаци агентстви туса хурасси çинчен», «Хула шкулĕсенче чăвашла вĕрентме пуçласси çинчен», «Халăх йăла-йĕркине упрасси çинчен» тата ытти те.

Мĕн тума пултарнă çак тапхăрта чăваш ĕçĕшĕн? Хулара та чăваш чĕлхине вĕрентме пуçланă. Тăван чĕлхемĕр пирки ятарлă саккун, Чăваш Республикин Патшалăх суверенлăхĕ çинчен калакан декларацци йышăннă. Тата çав тапхăрти çĕнĕлĕхсенчен пĕри – Чăваш Енĕн пĕрремĕш Президентне суйлани.

Паян мĕнле тĕллевсем, ĕçсем тăраççĕ конгресс умĕнче? Унчченхи – вун сакăр çул каялли пекех – наци аталанăвĕн тĕп çулйĕрне, культурăпа чĕлхе малашлăхне, наци пĕрлĕхне палăртасси тата çирĕплетесси, «тĕп» чăвашсемпе /Чăваш Енре пурăнакансемпе/ тулайри йăхташсен çыхăнăвне çĕнĕлле йĕркелесси тата ытти те.

Шăпа чăвашсене тĕнче тăрăх сапаланă пулин те авалхи халăхăн малашлăхĕ пулмаллах, вăл çут тĕнчерен çухалма пултараймасть. Чĕлхемĕре, халăхăмăра вара наци чăмăртăвĕ çеç упраса хăварать. Хамăр шăпамăра тÿрремĕн витĕм кÿме пултаракан, ырана хăвармасăр тумалли ĕçсенчен пĕри вăл – алăк умне çитсе тăнă çырав.

Республика кунĕ умĕн кăçал Шупашкарта ЧНК Мăн Канашĕн ларăвĕ иртрĕ. Тĕнче тăрăх сапаланнă йăхташăмăрсен представителĕсене ун чухне çырав вăхăтĕнче хамăрăн несĕлĕмĕрсем умĕнчи яваплăх пирки аса илтертĕмĕр. Мăн Канашăн ларăвĕнче илнĕ шухăш-кăмăлпа, вăй-хăватпа вырăнсене çитсен халăхпа ĕçлеме хистерĕмĕр. Халăх шучĕ хут çинче те çук пулсан – чăвашсем мар тăк – камсем эпир?

Чăваш наци конгресĕ – общество организацийĕ. Ăна тытса тăма патшалăх укçа-тенкĕ уйăрмасть, уйрăм мероприятисем йĕркелеме çеç пулăшать. Паллах, Раççей халăх çыравĕпе çыхăннисем валли нухрат тупнах. Çавна пула ЧНК президенчĕ Г.Архипов та, унти ытти хастарсем те, конгресс çумĕнчи «Янра, юрă» фольклорпа эстрада ансамблĕ те республика тулашне тухса çÿреме май тупнă. Çапах та вырăнтисем те – вăл е ку регионти чăваш наци культура автономийĕн, культура обществисемпе пĕрлĕхĕсен ертÿçисемпе хастарĕсем те – пуçарулăх кăтартмалла тесшĕн. Халĕ унашкал автономисемпе центрсен шучĕ 86 çитрĕ. Шупашкара килсе шавласа, кĕрлесе кайни çеç çителĕксĕр. Пушкăртстанра е Тутарстанра-и, Сарă тура е Чĕмпĕрте-и, Кемĕрте е Самарта-и – чăваш хастарĕсен тĕп каласăвĕ тăван халăх шăпи пирки пулмалла. Юлашки çырав /2002 ç./ тăрăх Раççейре 1,6 млн чăваш пурăнать. Икĕ çырав /1989 тата 2002 çç./ хушшинче 136 пин йăхташа çухатрăмăр. Çĕнни тата мĕн кăтартĕ?

Йыш чакнишĕн конгреса айăплани тĕлĕнтерет. Чи малтанах кашни чăваш яваплăха туймалла. Несĕлĕмĕрсен, мăн-мăн асаннесемпе асаттемĕрсен, аттепе аннемĕрсен умĕнче. Эпир – сăвар-пăлхар тăсăмĕсем. Эпир çеç йышлă çак халăхăн тăван чĕлхине, культурине, йăли-йĕркине упраса хăварма, тĕнче тăрăх сапаланнă йăхташăмăрсене пĕтĕçтерме пултаратпăр. Хамăр мухтавлă çак халăхăн ывăлĕ-хĕрĕ пулнине çыравра уççăн палăртар, ыттисене те çапла тума чĕнсе калар.

■ Надежда СМИРНОВА

Шутла, чăваш! Шутла... Халăх çыравĕнче пĕр чăваш та ан çухалтăр!

Çанталăк çинчен

Паян республикăра çумăр çăвать. Çил анăçран çеккунтра 4 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 4, çĕрле 2 градус** ăшă. Атмосфера пусăмĕ 729 мм, сывлăшри нÿрĕк 94 процент.

Кун тăршшĕ 10 сехет те 40 минут.

Ыран çумăрлă çанталăк пулать. Çил кăнтăр-хĕвел анăçĕнчен çеккунтра 5 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 3, çĕрле 1 градус ăшă.** Атмосфера пусăмĕ 736 мм, сывлăшри нÿрĕк 91 процент.

Кун тăршшĕ 10 сехет те 35 минут.